# Хыпар

Страница _________
Йĕрке -------

Автор ____________________________________________________________

(Хушамат, ят, ашш. яч.)

Автор адресĕ ______________________________________________________

____________________________________________________________________

Набор операторĕЮМ__ ______ Тĕп редактор______________________________

Редакциленĕ _______________________ Тĕп редактор çумĕ _______________________

Пай _______________________________ Секретариат _______________________________

Пай редакторĕ_____________________ Вăхăт “_____”______________________2010

Д-верстка-4-2008-2010-37-материалы-6 20.01.11

Кун йĕркинче

Çĕр саккунĕпе тĕрĕс усă курар

**Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Д.А.Медведев 2010 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнче "Раççей Федерацийĕн уйрăм саккунĕсен ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен çаврăнăшне хăвăртлатассипе çыхăннă пайĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен" саккуна алă пуснă. Вăл кăрлачăн 1-мĕшĕнчен вăя кĕнĕ. Çĕнĕлĕхсемпе паллаштарма Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕнчен С.А.Енилинăран ыйтрăмăр.**

– Саккун мĕн пур пай çĕрĕн уйрăм харпăрлăх правине патшалăх регистрацийĕ витĕр кăларма, çавăн пекех республикăри 400 пин гектар ытла йышăнакан çĕр лаптăкĕсене уйрăм харпăрлăха илме май туса парать, – **терĕ Светлана Александровна.** – Ан тив, вĕсен хуçисем ял хуçалăх производствине инвестици хывччăр, ăна аталантарма нумай вăхăтлăха паракан кредитсем илччĕр, халĕччен усă курман çĕре пусă çаврăнăшне кĕртчĕр, çĕр хутшăнăвĕсене çĕнĕ вăйпа йĕркелеччĕр. Саккун ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен тухăçлăхне ӳстерме пулăшĕ.

**– Пысăк улшăнусем икĕ тапхăртан тăраççĕ. Пĕрремĕшĕ иртнĕ çулхи раштав уйăхĕнчен пуçланнă, иккĕмĕшне кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тăсасшăн.**

– Çапла. Пая уйăрса кăларса уйрăм харпăрлăха илмелли тата харпăрлăх правине регистрацилеттермелли тӳлев улшăнчĕ. Малашне агропромышленноç организацийĕ те, хресчен-фермер хуçалăхĕ те, ытти харпăрлăхлă тытăм та Раççей Федерацийĕн субъекчĕн саккунĕпе çирĕплетнĕ хакпа пайсем туянма, сухалакан-акакан çĕрĕн харпăрлăх правине нумай вăхăтлăха /яланлăха/ регистрацилеттерме пултарать. Çĕрсен кадастр тӳлевĕн 15 процентĕнчен хаклăрах пулмалла мар.

Кăçалччен пайăн уйрăм харпăрлăх правине пĕр уйри тепĕр пай хуçине е пачах урăх çĕрти çынна çĕре уйăрса кăларас тĕллевпе кадастр ĕçне саккунпа килĕшӳллĕн пурнăçлаттарсан кăна сутма е парнелеме пултарнă. Ӳлĕм вара лаптăка çĕр виçекене кастарса тăкакланмасăрах тата тӳлевсĕрех предприяти-организацие е пĕр-пĕр çынна парнелеме ирĕк пур. Çак ыйтăва татса

пама Раççей Федерацийĕн Картографи, кадастр тата патшалăх регистрацийĕн республикăри управленине заявлени тăратмалла. Çын уйрăм харпăрлăх прависĕр юлнине регистрациленĕ кунран пуçласа пай хуçи пулма пăрахать. Çакăнпа пĕрлех çĕр е хула округне, е хула /ял/ тăрăхне куçать. Харпăрлăх правине вĕсем хăйсен аллине илме тивĕçлĕ. Вăл тепĕр çынна куçнă чухне ăна усă курма арендăна паракан килĕшĕве улшăну кĕртмелле мар.

**– Республикăра пушă выртакан ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсем чылай. Вĕсене çулла çум курăк пусса илни саккуна пăхăнманни мар-и? Вĕсемпе усă курманшăн явап тыттарма пăхнă-и?**

– Темиçе çул сухаламанни-акманни, тыр-пул çитĕнтерменни Раççей Федерацийĕн саккунне пăснине пĕлтерет. Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсенче палăртнă вăхăтра производствăпа çыхăннă ĕç пурнăçламан должноçри çыннăн тата предприяти-организацин яваплăхне палăрмаллах ӳстернĕ. Кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пай хуçине – 2-5 пин, должноçри çынна – 4-6 пин, предприяти-организацие 80-100 пин тенкĕ штраф тӳлеттереççĕ. Анана 3 çул тата ытларах пушă выртнарсан е экологие, çĕр ĕçĕн йĕркине пăхăнмасан хуçаран предприяти-организацирен туртса илме пултараççĕ.

**– Пая мĕнлерех шута илеççĕ?**

– Республикăра усă куракан 537,6 пин гектар çĕр. 126,4 пин гектара кăна уйрăм харпăрлăх правин патшалăх регистрацийĕ витĕр кăларнă. Паянхи кун тĕлне ыттипе арендăна илнĕ чухне çирĕплетнĕ килĕшӳсене патшалăх регистрацийĕ витĕр кăлармасăрах усă кураççĕ. Шута илнĕ пайсем Шăмăршăсен – 8740 гектар /52 % /, Вăрмарсен – 11030 /46 %/, Пăрачкавсен – 14471 /40 %/, Канашсен – 12988 /40 %/, Елчĕксен – 12923 /40 %/.

**– Муниципалитет пĕрлешĕвĕсен мĕнле ыйтусене татса памалла?**

– Харпăрлăхçăсен правине регистрацилессипе çыхăннă ыйтусене татса пама вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем те хутшăнаççĕ. Пай хуçисен 2012 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен лаптăксене виçмелли проектсем тутармалла. Харпăрлăхçăсем хатĕрлеттермесен муниципалитетсен ку ĕçе 2013 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен пурнăçлаттармалла. Харпăрлăха илме ыйту тăратман лаптăксене вĕсем çирĕплетнĕ проектсемпе килĕшӳллĕн шута илеççĕ тата пайсен харпăрлăхçисем пулса тăраççĕ. Малтанлăха шутланă тăрăх – вырăнти хăй тытăмлăхăн хăйĕн аллине 124 пин гектар илме, каярахпа çĕрсен кадастр тӳлевĕн 15 процентĕпе танлашакан хакпа сутсан 400 миллион тенкĕ ытла тупăш тума май пур. Çĕр виçтерсе, кадастр шутлавĕ тата пухусем ирттерсе пулакан тăкак 50 миллион тенкĕрен ытла пулас çук. Кĕскен, вырăнти бюджетшăн – хыснана пуянлатмалли тепĕр çăл куç. Вăл пайсене шута илме тата йĕркене кĕртме хавхалантарĕ. Çапах та ял тăрăхĕсенче ăнланса пĕтереймен ыйтусем сахал мар. Вĕсене татса пама пулăшас тĕллевпе вырăнти хăй тытăмлăх специалисчĕсем валли кăçал кашни район-хулара семинар-канашлу ирттеретпĕр.

**– Паллă ĕнтĕ, республика куçман пурлăха приватизацилесе пайта нумай курать. Ку тĕлĕшпе кăçал министерство умĕнче мĕнле тĕллевсем тăраççĕ?**

– Раççей Президенчĕ Д.А.Медведев Федераци Пухăвне янă Çырура тивĕçлĕ органсене патшалăх пурлăхне ăнăçлăрах приватизацилеме чĕнсе каларĕ. Унăн пысăк пайне

приватизацилес ĕçе хăвăртлатма ыйтрĕ. Приватизаци тĕллевĕ – пурлăха алла илнĕ компанисен ĕçне лайăххрах йĕркелесси тата патшалăх бюджетне хушма инвестиципе пуянлатасси, приватизаци кўнĕ тупăша чи малтанах экономикăна модернизацилеме ярасси. Çак темăна пĕлтĕрхи раштав уйăхĕнче Раççей Федерацийĕн экономика аталанăвĕн министрĕ Э.С.Набиуллина Мускавра ирттернĕ канашлура сўтсе яврăмăр. Унта эпĕ республикăн патшалăх пурлăхне приватизацилесси мĕнлерех пынине пĕлтертĕм.

Федерацин приватизаци çинчен калакан саккунне улшăнусем кĕртсе лайăхлатма Мускава сĕнўсем тăратрăмăр. Вĕсене РФ Экономика аталанăвĕн министерствинче йышăнчĕç. Приватизаци çинчен калакан право акчĕсене улшăнусем кĕртнĕ чухне шута илме пулчĕç. ЧР Министрсен Кабинечĕ иртнĕ çул вĕçĕнче Чăваш Ен пурлăхне сутас ĕçе йĕркелеме Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министерствине хушрĕ. Патшалăх пурлăхне приватизацилесси, сутнă объектсен харпăрлăх правине пĕринчен тепĕрне панине регистрацилесси вăй илсех пырать.

**– Бюджет реформине пурнăçа кĕртесси, патшалăх учрежденийĕсен тытăмне улăштарасси çинчен нумай калаçаççĕ. Федерацин иртнĕ çулхи çу уйăхĕн 8-мĕшĕнчи 83-мĕш саккунне республикăра пурнăçа кĕртекенни тата бюджет тытăмне çĕнетсе улăштарас тĕлĕшпе тўрремĕнех вăй хураканни – Чăваш Республикин Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министерстви. Патшалăх, муниципалитет учрежденийĕсенче вăй хуракансем пăшăрханаççĕ. Вĕсене мĕн кĕтет?**

– Республика тата муниципалитет учрежденийĕсене реформăласси – министерство 2011 çулта пурнăçламалли тĕп ĕçсенчен пĕри. Çак тапхăра тăрăшсах хатĕрлентĕмĕр. Право никĕсне турăмăр. Патшалăхăн тата муниципалитетăн 1,5 пин учрежденийĕн тытăмне тĕпрен улăштаратпăр. Пирвай кущман пурлăхăн тата уйрăмах хаклă кущакан пурлăх списокне çирĕплетмелле. Вĕсене шута илни автономи тата бюджет учрежденийĕсем патшалăх /муниципалитет/ хушăвне пурнăçланă чухне пулакан тăкака саплаштармашкăн республикăн тата муниципалитетсен бюджечĕсенчен уйăракан субсидие палăртма кирлĕ. Учреждени тытăмне улăштарни ăна çĕнĕрен йĕркелени /реорганизаци/ мар. Çавăнпа ертўçĕсене ятарласа хушу кăларса уйăрса лартас, çынсене ĕçрен кăларас ыйту ăтмасть.

Учрежденисене пулăшас тĕллевпе эпĕ патшалăх пурлăхĕпе мĕнлерех усă курнине, ăна еплерех упранине тĕрĕслемелли график çирĕплетрĕм. Пурлăх ыйтăвĕсене вĕсен йĕркелўçисем пулса тăракан министерствăсемпе пĕрле тишкеретпĕр. Ятарласа туса хунă комиссисем 158 патшалăх учрежденине тĕрĕслĕç. Ĕçре малти вырăнта – объектсен тĕп хăвачĕсене шута илесси, кущакан тата кущман пурлăхпа тĕллевлĕн усă курнипе курманнине палăртасси. Уйрăмах хаклă кущакан пурлăх шутне 50 пин тенкĕрен хаклăрах тата учреждени ĕç-хĕлĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнакан пурлăх кĕрет.

Юрий МИХАЙЛОВ

ыйтса пĕлнĕ.